26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
ФЕВРАЛЬ
9
ЮНКУН
28(6523) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Арми генералне ТОЛБУХИНА

УКРАИНАРИ 4-мӗш фронт ҫарӗсем, нимӗҫсен ДНЕПР шывӗн сулахай енчи НИКОПОЛЬ хулинчен кӑнтӑртарахри плацдармӗ ҫинчи вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ оборонине татнӑ та, тӑватӑ кун хушши малалла тапӑнса пырса, тӑшманӑн ҫичӗ пехотнӑй дивизине йывӑр поражени кӳнӗ, вара пӗтӗм плацдарм тӑршшӗпех ДНЕПР шывӗ патне пырса тухнӑ.

Ҫак операцие пула пирӗн ҫарсем нимӗҫсен ДНЕПР шывӗн сулахай енчи 120 километр сарлакӗш, 35 километр тӑршшӗ вырӑн йышӑнса тӑнӑ плацдармне, операцисем тӑвас тӗлӗшпе паха пулса тӑнӑскерне, пӗтӗмӗшпех пӗтерсе тӑкнӑ.

Наступлени туса пырса, пирӗн ҫарсем Запорожье облаҫӗнчи районцентрне — КАМЕНКА хулине тытса илнӗ тата халӑх пурӑнакан ытти 40 пункта ытла йышӑнса илнӗ.

Нимӗҫсен НИКОПОЛЬ патӗнчи плацдармне пӗтерсе тӑкасшӑн ҫапӑҫнӑ чухне ЦВЕТАЕВ генерал-полковникӑн, ЛЕЛЮШЕНКО генерал-лейтенантӑн, ЖЕРЕБИН генерал-майорӑн, БЕЛОВ генерал-майорӑн, ГОРОХОВ генерал-майорӑн, ВЛАДЫЧАНСКИЙ полковникӑн ҫарӗсем, артиллери генерал-лейтенанчӗн КРАСНОПЕВЦЕВАН артиллерисчӗсем, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн СВИРИДОВАН, КОРБУТ полковникӑн танкисчӗсем тата авиаци генерал-лейтенанчӗн ХРЮКИНАН, авиаци генерал-майорӗн САБИЦКИН, авиаци генерал-майорӗн ФИЛИНАН, авиаци генерал-майорӗн КУЗНЕЦОВАН тата ПРУТКОВ полковникӑн летчикӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлаха палӑртса хӑварас тесе, ҫапӑҫусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чӑссене «НИКОПОЛЬСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, февралӗн 8-мӗшӗнче, 20 сехетре, пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, ҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа вуникӗ хут пӗр харӑс персе, тӑшманӑн паха плацдармне тытса илнӗ Украинӑри 4-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн Эсир ертсе пыракан мӗнпур ҫарсене, нимӗҫсен НИКОПОЛЬ патӗнчи плацдармне пӗтересшӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн пыракан кӗрешӳре вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ
И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи февралӗн 8-мӗшӗ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Арми генералне МАЛИНОВСКИЕ
Арми генералне ТОЛБУХИНА

УКРАИНАРИ 3-мӗш фронт ҫарӗсем, флангран УКРАИНАРИ 4-мӗш фронт ҫарӗсем пулӑшнипе, наступлени вӑйлатса пырса, нимӗҫсен НИКОПОЛЬ патӗнчи группировкине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ та паян, февралӗн 8-мӗшӗнче, Украинӑн пысӑк промышленность центрне — НИКОПОЛЬ хулине штурмласа тытса илнӗ.

НИКОПОЛЬ хулине тытса илесшӗн пынӑ ҫапӑҫусенче ЧУЙКОВ генерал-полковникӑн, ШЛЕМИН генерал-лейтенантӑн, ЛЕЛЮШЕНКО генерал-лейтенантӑн, КУПРИЯНОВ генерал-майорӑн, ГЛАЗУНОВ генерал-майорӑн, КАРАМЫШЕВ генерал-майорӑн, ГОЛОСКО генерал-майорӑн, АФАНАСЬЕВ генерал-майорӑн, ЗДАНОВИЧ генерал-майорӑн, СОКОЛОВ генерал-майорӑн, ВАГИН генерал-майорӑн, КАМЫНИН полковникӑн, ФОМИЧЕНКО полковникӑн, ЗАВЬЯЛОВ подполковникӑн, СКЛЯРОВ подполковникӑн ҫарӗсем, артиллери генерал-лейтенанчӗн НЕДЕЛИНАН, артиллери генерал-майорӗн ЛЕВИНАН артиллерисчӗсем, авиаци генерал-лейтенанчӗн СУДЕЦАН, авиаци генерал-майорӗн ТОЛСТИКОВАН, авиаци генерал-майорӗн ШЕВЧЕНКАН летчикӗсем тата ЗАСИМУК майорӑн саперӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве яланлаха палӑртса хӑварас тесе, НИКОПОЛЬ хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чӑссене «НИКОПОЛЬСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, февралӗн 8-мӗшӗнче, 21 сехетре, пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, ҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа вуникӗ хут пӗр харӑс персе, НИКОПОЛЬ хулине илнӗ хамӑр паттӑр ҫарсене Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн Эсир ертсе пыракан мӗнпур ҫарсене, НИКОПОЛЬ хулине ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн пыракан кӗрешӳре вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ
И. СТАЛИН.

1944 ҫулхи февралӗн 8-мӗшӗ.

Хӗрлӗ Ҫарӑн Сывлӑш-ҫар вӑйӗсен офицерӗсене Совет Союз Геройӗн ятне пани

Нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан кӗрешӳре фронтӗнче командованин панӑ боевой заданисене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн тата ҫавӑн чухне хастарлӑхпа паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн, СССР Верховный Совечӗн Президиумӗн Указӗ тӑрӑх, Хӗрлӗ Ҫарӑн Сывлӑш-ҫар вӑйӗсен 97 офицерне, Ленин орденӗпе тата «Ылтӑн ҫӑлтӑр» медальпе наградӑласа, Совет Союз Геройӗн ятне панӑ. (ТАСС).

П. К. Пономаренко — Белоруссин Совнаркомӗн Председателӗ

ГОМЕЛЬ, февралӗн 7-мӗшӗ. (ТАСС). БССР Верховный Совечӗн Президиумӗ 1944 ҫулхи февралӗн 7-мӗшӗнче пулнӑ Указ тӑрӑх, П. К. Пономаренко юлташа Белоруссин ССР-ӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председательне [illegible] партиа.

И. С. Былинский юлташа Белоруссин ССР-ӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗн пӗрремӗш [illegible] пулса ӗҫлеме уйӑрса [illegible]

Совет Информаци Бюровӗнчен

ФЕВРАЛӖН 7-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Февралӗн 7-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем СИВЕРСКИЙ станцийӗнчен кӑнтӑртарахра тӑшманпа ҫапӑҫса малалла куҫса пынӑ, НАТАЛЬИНО, ПЕЛКОВО, ЧЕРЕМНА, ПЕСОЧНЫЙ МОХ, ШУПОГОЛОВО, МОРОВИНО, БУТКОВО, ЕРЫШЕВО ятлӑ ялсене, ЧОЛОВО ятлӑ поселока тата ЧОЛОВО ятлӑ чугун ҫул станцине йышӑнса илнӗ.

НОВОСОКОЛЬНИКИ хулинчен ҫурҫӗртерехре тата ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем малалла тапӑнса пынӑ, 80 ял ытла тытса илнӗ, вӑл шутра ЗЕНЦОВО, АРТИМОНОВО, ФЕТИНИНО, ВАШКИ, ГОСТИЛОВО, СЕМЕНОВО, РЫКШИНО ятлӑ ялсем.

ЗВЕНИГОРОДКА тата ШПОЛА хулисенчен ҫурҫӗртерехре пирӗн ҫарсем ҫаплах тӑшманӑн ҫавӑрса илнӗ группировкине пӗтересшӗн ҫапӑҫнӑ, ҫавӑрса илнӗ унка хӗссе пырса, ПОПОВКА, МЕЖИРИЧЬ, БОЛЬШОЕ СТАРОСЕЛЬЕ, ВЯЗОВОК, КЛИЧКОВО ятлӑ ялсене тытса илнӗ.

ДНЕПР шывӗн кукринче пирӗн ҫарсем ҫаплах НИКОПОЛЬ районӗнче татса илнӗ тӑшман группировкине пӗтересшӗн ҫапӑҫнӑ, НОВО-ИВАНОВКА, МАКСИМОВСКИЙ, КРАСНОГРИГОРЬЕВКА, НОВО-ПАВЛОВКА, ДОВГАЛЕВКА ятлӑ ялсене тытса илнӗ. Пирӗн ҫарсем хӗвелтухӑҫ енчен НИКОПОЛЬ хули ҫумнех пырса ҫитнӗ, тӑшманпа хула хӗрринче ҫапӑҫма пуҫланӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведка тунӑ, тӑшмана хирӗҫ артиллерипе минометсенчен персе тӑнӑ тата чылай пунктсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Февралӗн 6-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 53 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е пӗтерсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 71 самолетне персе ӳкернӗ.

ПИРӖН САМОЛЕТСЕМ ХЕЛЬСИНКИ ХУЛИНЕ МАССАЛЛАН ТАПАННИ

Февралӗн 7-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн бомбардировщиксен пысӑк ушкӑнӗ Хельсинки хулине массӑллӑн тапӑннӑ. Бомбӑсене тӑшманӑн Хельсинки хулинчи ҫар промышленность объекчӗсем ҫине, чугун ҫул узелӗ ҫине, порт ҫине тата хула варри ҫине пӑрахнӑ.

Пирӗн самолетсен экипажӗсем пӗлтернӗ тӑрӑх, бомбӑсем пӑрахнине пула вӑтӑр тӗлте ытла пушар тухнӑ, пушарсенче вӑйлӑ взрывсем пулнӑ. Пуринчен вӑйлӑ пушарсем ҫак тӗлсенче пулнӑ: газохранилище, ҫар казармисен, электромеханически завод районӗнче, вокзал районӗнче, станципе депо территорийӗнче. Судкӑсем тӑвакан заводпа типӗ док районӗнче, ҫавӑн пекех тата автосборочнӑй завод территорийӗнче вӑйлӑ взрывсем пулнӑ. Каялла таврӑннӑ чухне пирӗн летчиксем хуларан 250 километр вӗҫсе кайсан та пушар ҫулӑмне лайӑх курса тӑнӑ.

Февралӗн 7-мӗшӗнче кӑнтӑрла сывлӑшри разведкӑран ҫакна курса илнӗ: Хельсинки хулинчи пушарсене сӳнтереймен, тӗтӗм ӑшне пулнӑ хула ҫаплах ҫуннӑ.

Пирӗн тӑватӑ самолет хӑйсен базисене таврӑнман.

* * *

Сиверский станцийӗнчен кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем ҫапӑҫса малалла куҫса пынӑ. Пӗр участокра пӗр соединени боецӗсем, тӑшмана ҫавӑрса илмелли хӑюллӑ маневр туса, нимӗҫсене виҫӗ ялтан хӗссе кӑларнӑ. Гитлеровецсене пӗр батальона ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. 2 бронемашина, 7 тупӑ, минометсен батарейине, 24 автомашина, 6 боеприпас склачӗ тытса илнӗ. Тепӗр районра тӑшман, хӑйӗн ҫухатнӑ позицийӗсене каялла тытса илме хӑтланса, контратака тунӑ. Пирӗн боецсем пӗр пайӗ гитлеровецсене пӑшалпа тата пулеметпа персе ҫӗр ҫумне лапчӑтса выртарнӑ та малалла куҫма чарса тӑнӑ. Ҫав вӑхӑтра пирӗн ытти подразделенисем нимӗҫсен флангне тухнӑ та, ҫав тери хӑвӑрт пырса ҫапса, вӗсене аркатса тӑкнӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн 300 вилли ҫити выртса юлнӑ.

Пирӗн авиаци ҫулсем тӑрӑх пыракан нимӗҫ ҫарӗсене пыра-пыра ҫапнӑ. Кун каҫиччен совет летчикӗсем темиҫе танкпа тупӑ, ҫарсемпе вӑрҫӑ хатӗрӗсем турттарса пыракан 200 автомашина таран пӗтерсе тӑкнӑ, чугун ҫул составне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ, тӑшман пехотине пӗр батальона ҫити сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Новосокольники хулинчен ҫурҫӗртерехре тата ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пӗр соединени чӑҫӗсем нимӗҫсене кӗтмен ҫӗртен пырса ҫапнӑ та вӗсен оборонине татнӑ. Ҫитӗнӗве вӑйлатса пырса, пирӗн ҫарсем 80 ял ытла тытса илнӗ. Ҫапӑҫусенче тӑшман салтакӗсемпе офицерӗсене 3.000 ҫын таран пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫсенчен 57 тупӑ, 15 миномет, 118 пулемет, 11 огнемет, 8 радиостанци, тӗрлӗрен 22 склад тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ. Пӗр ялта пирӗн подразделенисем нимӗҫсен артиллери полкӗн штабне аркатса тӑкнӑ, 150 миллиметрлӑ 8 тупӑ, ҫавӑн пекех тата боеприпассен пысӑк складне тытса илнӗ. Чылай ҫынна тыткӑна илнӗ.

* * *

Звенигородкӑпа Шпола хулисенчен ҫурҫӗртерехре пирӗн ҫарсем тӑшманӑн ҫавӑрса илнӗ группировкине пӗтересшӗн ҫапӑҫнӑ. Пӗр соединени чӑҫӗсем, ҫавӑрса илнӗ унка хӗссе пырса, нимӗҫсене виҫӗ ялтан хӗссе кӑларнӑ. Ҫав ялсемшӗн пынӑ ҫапӑҫусенче 600 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ. Хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 2 тупӑ, 20 хир туппи, боеприпас склачӗ тата 40 автомашина тытса илнӗ. Пирӗн тепӗр соединени чӑҫӗсем нимӗҫсен Вязовок ятлӑ ялта тӑнӑ гарнизонне ҫавӑрса илнӗ те кӗске вӑхӑт хушши пынӑ ҫапӑҫура пӗтерсе тӑкнӑ. Аркатса тӑкнӑ гарнизонӑн юлашки 200 салтакне тыткӑна илнӗ. Звенигородка хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тӑшман ҫӗнӗ резервсем илсе пынӑ та, хӑйӗн ҫавӑрса илнӗ группировкине пулӑшма хӑтланса, каллех пирӗн оборонӑна татса кӗме хӑтланнӑ. Пирӗн ҫарсем, тӑшмана хӑйне хирӗҫ пырса ҫапса, гитлеровецсене каялла ывӑтса янӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн 800 вилли таран выртса юлнӑ. Нимӗҫсен 32 танкне ҫунтарса янӑ е персе ҫӗмӗрнӗ. Каялла чакакан нимӗҫсем 22 противотанковӑй тупӑ, 4 тягач тата пулеметсемпе автоматсем нумай пӑрахса хӑварнӑ.

* * *

Украинӑри 3-мӗш фронт ҫарӗсем ӑнӑҫлӑ наступлени туса пынӑ. Апостолово хулинчен кӑнтӑртарахра пӗр соединени чӑҫӗсем, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан чылай пунктсене тытса илнӗ. Нимӗҫсен ҫӗмӗрсе тӑкнӑ тата йӑркерен кӑларнӑ чӑҫӗсем, хӑйсен техникипе хӗҫпӑшалне пӑрахса, каялла чакаҫҫӗ. Большая Костромка, Первомайск, Новосеменовка ялӗсене йышӑнса илнӗ, пирӗн гвардеецсем 306 автомашина, 22 мотоцикл, 200 лаша (лавӗсемпе пӗрлех), 215 пулемет, 2 бензохранилище, 7 бронетранспортер тата 6 склад тытса илнӗ. Пӗр соединени боецӗсем паян нимӗҫсенчен 41 тупӑ, 5 тягач, 203 автомашина, 3 радиостанци тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ. Нумай ҫынна тыткӑна илнӗ. Никополь хули районӗнче пирӗн ҫарсем нимӗҫсен хӗвеланӑҫнелле чакмалли ҫулӗсене татнӑ та вӗсен ҫавӑрса илнӗ группировкине пӗтерессшӗн ҫапӑҫнӑ. Нимӗҫсен темӗн чухлӗ ҫын пӗтет пулин те, вӗсем совет ҫарӗсене Никополь хули патне пыракан ҫулсем ҫинче чарса тӑма тӑрӑшаҫҫӗ, танксемпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсене ҫӗре алтса лартаҫҫӗ те, вара вӗсемпе куҫса ҫӳремесӗр пӗр тӗлтен персе тӑраҫҫӗ. Пирӗн чӑҫсем, ӑста маневрсем туса, тӑшмана флангсенчен ҫавӑра-ҫавӑра илеҫҫӗ, вӑйлӑ ҫапӑҫусенче унӑн ҫыннисемпе техникине пӗтерсе тӑкаҫҫӗ. Паян пирӗн ҫарсем Никополь хули ҫумне таччӑнах пырса тӑнӑ, халӗ тӑшманпа хула тулашӗнче ҫапӑҫаҫҫӗ.

* * *

Каменец-Подольск облаҫӗнче кӗрешекен партизансен отрячӗ ҫӗрле тӑшман йышӑнса тӑракан пысӑк чугун ҫул станцине тапӑннӑ. Совет патриочӗсем 20 паровоза сиплӗнтерсе янӑ е сиенленӗ, станцири стрелкӑсене ҫӗмӗрнӗ, горючи тултарнӑ 13 цистернӑна тата ҫыхӑну узелне ҫунтарса янӑ. Ҫав облаҫри партизансен тепӗр отрядӗнчи ушкӑн нимӗҫ бронепоездне ӳпӗнтерсе янӑ.

Комсомольски МТС тракторсемпе вӗсен ҫумне кӑкарса ӗҫлемелли машинӑсене юсаса пӗтернӗ

ВКП(б) Обкомне ЧАРЫКОВ юлташа
Чӑваш АССР Совнаркомне МАТВЕЕВ юлташа
Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариатне МАЛОВ юлташа

Комсомольски МТС коллективӗ, Хӗрлӗ Ҫар тунӑ ҫӗнтерӳсемпе хавхаланса, Горький облаҫӗнчи Каменка МТС коллективӗ чӗнсе каланине ответлесе йышӑннӑ обязательствӑсене чыслӑн пурнӑҫа кӗртрӗ.

Февралӗн 6-мӗшӗ тӗлне тракторсемпе вӗсем ҫумне кӑкарса ӗҫлемелли машинӑсене пӗтӗмпех юсаса пӗтернӗ, запас пайсене 26.807 тенкӗлӗх юсаса ҫӗнетнӗ тата ҫӗкӗрен 15.425 тенкӗлӗх туса хатӗрленӗ. Халӗ тырпулсене пухса кӗртмелли машинӑсене юсатпӑр.

Комсомольски МТС директорӗ АЛЕКСЕЕВ.
МТС-ри парторганизаци секретарӗ АСЕЙНОВ.
МТС-ри старши механик КУДРЯВЦЕВ.

Илнӗ обязательствӑсене пурнӑҫлаҫҫӗ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, (Хамӑр корр.). МТС-ри трактористсемпе трактористкӑсем тата машинӑсене юсакан рабочисем, Горький облаҫӗнчи Каменка МТС-ӗн коллективӗ чӗнсе каланине сӑтсе-явнӑ хыҫҫӑн, тракторсене январӗн 6-мӗшӗ тӗлне, комбайн моторӗсене, плугсене тата сеялкӑсене апрелӗн 1-мӗшӗ тӗлне юсаса пӗтерме обязательство илнӗччӗ.

МТС коллективӗ илнӗ обязательствӑсене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫласа пырать. 44 трактора пӑхнӑ срокра юсаса пӗтернӗ. Кивӗ пайсене план тӑрӑх 3.300 тенкӗлӗх ҫӗнетмелле пулнӑ пулсан, 10.601 тенкӗлӗх ҫӗнетнӗ. Ҫӗнӗ пайсем 1.400 тенкӗлӗх тӑвас вырӑнне 3.000 тенкӗлӗх тунӑ. Ку тӗлӗшпе механик Виноградов тата мастерской заведующийӗ Ильюс юлташсем тӑрӑшса ӗҫленине палӑртмалла. Вӗсем поршеньсене, гильзӑсене тата пальцӑсене юсас ӗҫе пур трактористсене те явӑҫтарнӑ, вӗсене ӗҫре пӗрмаях пулӑшса пынӑ, ӗҫ мӗнле пынине тӗрӗслесе тӑнӑ.

Егоров юлташ ертсе пыракан бригадӑри трактористсем январӗн 6-мӗшӗ тӗлне бригадӑри 3 трактора тата комбайн моторӗсене те юсаса пӗтернӗ. Бригадӑри трактористсемпе комбайнерсем: Титов, Борисова, Кондратьева, Егорова юлташсем халӗ тракторсен кӑкармалли плугсене, сеялкӑсене юсаҫҫӗ.

Мастерскойра ӗҫ вӗресе тӑрать. 30 ҫын ытла тикӗнсех ӗҫлеҫҫӗ. Апрелӗн 1-мӗшӗ тӗлне мӗнпур машинӑсене юсаса пӗтерессишӗн ӑмӑрту анлӑн сарӑлса кайрӗ.

МТС ҫумӗнче трактористсен курсӗ ӗҫлеме тытӑнчӗ, унта 40 ҫын вӗренет, механиксен курсӗнче 8 ҫын вӗренет. Красноармейски МТС-ӑн коллективӗ илнӗ обязательствӑсене вӑхӑтра тата чыслӑн пурнӑҫлӗ.

РЕСПУБЛИКӐРА 1944 ҪУЛХИ ФЕВРАЛӖН 5-МӖШӖ ТӖЛНЕ ТРАКТОРСЕМ ЮСАМАЛЛИ ПЛАНА МӖН ЧУХЛЕ ТУЛТАРНИНЕ КӐТАРТАКАН СВОДКА

МТС-сем	Пурӗ юсанӑ (процентпа)	Февраль уйӑхӗнчи плана тултарнӑ (процентпа)
Красноармейски	100,0	—
Шӑхасан	95,2	—
Йӗпреҫ	94,0	50,0
Шупашкар	92,3	—
Комсомольски	88,0	—
Ишлей	82,6	15,3
Вӑрнар	71,6	—
Сӗнтӗр	70,[illegible]	11,1
Елчӗк	65,5	—
Куславкка	65,2	—
Элӗк	63,6	—
Канаш	62,2	—
Ҫӗмӗрле	61,5	—
Шӑмӑршӑ	61,1	—
Сӗнтӗрвӑрри	60,0	—
Первомайски	60,0	—
Чкаловски	59,6	—
Етӗрне	58,9	—
Ҫӗрпӳ	57,6	—
Кувакино	56,3	13,3
Вӑрмар	55,3	30,0
Хӗрлӗ Чутай	52,1	25,0
Улатӑр	46,4	—
Тӑвай	45,0	—
Пӑрачкав	33,6	—
Пӗтӗмпе	64,4	6,4
Февралӗн 1-мӗшӗ тӗлне пулнӑ	63,2	—

Уйӑхлӑхра ҫуракине хатӗрленсе ҫитетпӗр

Эпир ҫитес ҫуракине тахҫанах хатӗрленме пуҫланӑ. Анчах вӑл ӗҫ ку таринччен кирлӗ хӑвӑртлӑхсемпех пулса пырайман. Ҫуракине хатӗрленес ӗҫ уйрӑмах ҫак уйӑх вӗҫӗнче вӑйланчӗ.

Эпир хамӑр умма ҫитес ҫуракине ҫак уйӑхлӑх хушшинче хатӗрленсе ҫитес задачӑна лартрӑмӑр. Халӗ бригадӑсенче ӑмӑрту сарӑлсах пырать. Ӑмӑртура II-мӗшпе III-мӗш бригадӑсем малта пыраҫҫӗ. Вӗсем вӑрлӑхлӑх тырра пур культурӑсем енӗпе те сортласа пӗтерчӗҫ, ялхуҫалӑх машинисене юсаса лартрӗҫ.

Колхозӑн план тӑрӑх ҫак хӗлте уя 4000 лав тислӗк кӑлармалла, январӗн 20-мӗшне 1350 лав кӑларнӑ, кӗл 90 центнер пухас вырӑнне 45 центнер пухнӑ. Ку ӗҫсене те эпир февралӗн 15-мӗшне ҫитиччен ытлашшипех пурнӑҫлатпӑр. Халӗ эпир плугсемпе сӳресене пурне те юсаса ҫитертӗмӗр, ыран-виҫмине мӗнпур вӑрлӑхсене сортласа пӗтеретпӗр.

К. УНДРИЦОВ,
Калинино районӗнчи Чапаев ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ.

Смоленск облаҫӗнче МТС-сене юсаса йӗркелеҫҫӗ

Смоленск облаҫӗнчи ирӗке кӑларнӑ районсенче нимӗҫ оккупанчӗсем ишӗлтернӗ МТС-сене юсаса ура ҫине тӑратаҫҫӗ. Кӑҫал татах та 36 МТС-а, юсамалли 50 мастерскоя ӗҫе яраҫҫӗ.

Трактористсемпе механиксем строительство ӗҫӗсене пурне те тенӗ пекех хӑйсем тӑваҫҫӗ. Вӗсем ҫӗмрӗлнӗ тракторсене юсаҫҫӗ. Ҫав тракторсем ҫуркунне Алтайри трактор заводӗ туса кӑларакан ҫӗнӗ машинӑсемпе пӗрле хире тухӗҫ. (ТАСС).

ТИМЛӖНРЕХ ӖҪЛЕР

СОВЕТСКОЕ. 1944 ҫулта вӑйлӑ тырпул туса илес тесе, Мӑн Явӑшри Сталин ячӗпе тӑракан колхоз ҫак кунсенче кӑна уя 500 лав тислӗк кӑларчӗ. 704 пӑт кӗл тата 130 пӑт кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухса хатӗрленӗ. 140 гектар ҫинче юр тытнӑ, плугсене, сӳресене пӗтӗмпех юсанӑ. Вӑрлӑхсене сортланӑ, ут таврашӗсем ҫителӗклӗ тата вӗсене юсаса хунӑ.

Калас пулать, уя тислӗк кӑларасси колхозсенче халӗ те лайӑхах пымасть-ха. Вырӑнти удобренисене хатӗрлесе уя кӑларас уйӑхлӑхра тимлӗнрех ӗҫлемелле, бригадӑсем хушшинче социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса ямалла. **Н. ПАХОМОВ.**

Колхоза пулӑшатпӑр

КӲКЕҪ. Альгешри тулли мар вӑтам шкулти комсомолецсемпе пионерсем кӑҫал вырӑнти удобренисем хатӗрлемелли уйӑхлӑха хутшӑнса, 17 центнер кӗл, 12 центнер ытларах кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухрӗҫ. Хире 126 лав тислӗк кӑларнӑ, 25 гектар ҫинче юр тытрӗҫ. Ку ӗҫре уйрӑмӑнах Н. Захаров, А. Ташков, В. Малинов, А. Максимов, Г. Кадыков тата В. Николаев комсомолецсем активлӑн хутшӑнса ӗҫлерӗҫ.

Вырӑнти удобренисем пухас тӗлӗшпе колхозсене малашне тата ытларах пулӑшас тесе, комсомолецсене уйрӑм колхозсем ҫумне ҫирӗплетнӗ.

В. ДАНИЛОВА,
ВЛКСМ комитечӗн секретарӗ.

Художествӑллӑ пултарулӑх смотрӗн итогӗсем

1943 ҫулхи декабрӗн 27-мӗшӗнчен кӑҫалхи январӗн 15-мӗшӗнче Сӗнтӗр районӗнче художествӑллӑ пултарулӑх смотрӗ пычӗ. Унта пӗтӗмпе 35 коллектив хутшӑнчӗҫ. Жюри Пушкӑртри, Пашалужассинчи, Югӑри, Ильинкӑри, Калайкассинчи, Янӑмри тулли мар вӑтам тата Сӗнтӗрти вӑтам шкулсен коллективӗсем мала тухнине палӑртрӗ, вӗсене укҫа тата хисеплӗ грамота парса наградӑларӗ. Кунсӑр пуҫне, смотрта хӑйсен пултарулӑхне кӑтартнӑ 15 вӗренекене тата 8 кружок руководительне укҫа парса премилерӗ. Вӗсем пурте хӑйсен преми укҫисене Донбасс облаҫӗнчи ачасене пулӑшнӑ ҫӗре пачӗҫ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Çамрăк кадрсем ертсе пырас ĕçсенче

Иртнĕ çулта пирĕн Сĕнтĕр районĕнчи колхозсенче ертсе пырас ĕçсене çамрăк кадрсем нумай хутшăнчĕç. Колхоз председателĕсем пулса 26 çын, ферма заведующийĕсем—26 çын, уйхир бригадирĕсем—120 çын ĕçлеççĕ. Вĕсенчен нумайăшĕсем коммунистсемпе комсомолецсем. Çакă вăл ВКП(б) райкомне тата пуçламĕш парторганизацисене çамрăк кадрсемпе ĕçлессине тĕпренех лайăхлатма, вĕсен пĕлӳлĕхне ӳстерессишĕн тимлĕрехчĕ ĕçлеме хушрĕ.

Чăн та, парторганизацисем çамрăк кадрсене пулăшас, вĕсен пĕлĕвне çĕклес тĕлĕшпе сахал мар тунă. Иртнĕ çулта ялхуçалăхĕнчи кадрсене пурĕ 338 çынна тĕрлĕ курссемпе семинарсенче вĕрентнĕ. Вĕсем унта ялхуçалăх эртелĕн Уставне, агротехникăна, ертсе пыракан работниксен прависемпе обязанноçĕсене, ĕçшĕн тӳлемелли йĕркесене вĕреннĕ. Кусемсĕр пуçне тĕнчери лару-тăрупа тата фронтри улшăнусемпе паллашнă. Сталин юлташăн Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче тухса каланă сăмахĕсемпе приказĕсене вĕреннĕ. 1943 çулăн юлашки 6 уйăхĕнче кăна колхозниксемпе ялти актив хушшинче 470 хутчен докладсемпе лекцисем ирттернĕ.

Эртел пурлăхне, правленин ĕç хучĕсене мĕнле туса пырасси, кадрсене суйласа илсе ĕçе лартасси тата вĕсене пăхса ӳстересси, вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условисенче ялхуçалăх ĕçне йĕркелесе ертсе пырасси çинчен колхозсен председателĕсемпе калаçусем нумай ирттернĕ.

Çĕнĕ кадрсене ĕçлеме вĕрентес тĕлĕшпе пĕр-пĕрин опытне тишкерни, малта пыракансен опычĕпе усă курни пысăк выран йышăнса тăрать. Çавăнпа та эпир колхоз председателĕсемпе ферма заведующийĕсене тата бригадирсене кашни пухмассеренех малта пыракансен ĕç опычĕпе паллаштаратпăр.

Парторганизацисем пулăшнипе çамрăк кадрсенчен нумайăшĕсем хăйсен пултаруллăхне часах кăтарса пачĕç. Отечественнăй вăрçă инваличĕ Николай Скворцов «КИМ» колхоза çулталăк хушшинчех лайăх ĕçлекен колхозсен ретне кăларчĕ. «КИМ» колхоз тырпулсене кĕске срокра тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртсе, октябрь уйăхĕнче авăн çапса пĕтерчĕ, государство умĕнчи обязательствăсене районри колхозсенчен пуринчен малтан пурнăçларĕ, çĕнĕ çул тĕлне çуракине хатĕрленсе çитрĕ. Скворцов юлташ ертсе пыракан колхоз выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстерес, унăн тухăçлăхне çĕклес тĕлĕшпе те паллă çитĕнӳсем турĕ.

Çавăн пекех çамрăк председательсем Роман Андреевпа Федор Палеев юлташсем ертсе пыракан Мичурин тата Каганович ячĕсемпе тăракан колхозсем те лайăх ĕçлеççĕ. Отечественнăй вăрçă инваличĕ Иван Куликов юлташ заведующи пулса ĕçлеме пуçличчен «Хĕрлĕ Октябрь» колхоз фермисем юхăнчăк пулнă. Куликов юлташ кĕске вăхăтрах ферма çурчĕсене юсаса çитерчĕ, унччен пухăнса выртнă тислĕке 810 лав хире кăларчĕ. Колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ытлашшипех тултарчĕ.

Анчах та хăшпĕр пуçламĕш парторганизацисем çамрăк кадрсене пĕр выранта нумай вăхăт ĕçлеттерсе, ӳссе пыма, лайăх майсем туса парас выранне, хăйсемех çав йĕркене пăсаççĕ. Юнгăри парторганизаци секретарĕ Б. Фролов юлташ, ВКП(б) райкомĕпе райçĕрĕç пайне пĕлтермесĕрех, «Первое мая» колхоз членĕсен пĕрлешӳллĕ пухăвне ирттернĕ те, колхоз председателĕ пулма Ярославка ялпо бухгалтерне Кажикова юлташа суйланă. ВКП(б) райкомĕ Фролов йăнăшне сивлесе, ăна çийĕнчех тӳрлетрĕ.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче хĕрарăмсен колхоз ĕçĕнчи выранĕ нумай ӳсрĕ. Çавна май, ертсе пырас ĕçе те хĕрарăмсем чылай хутшăнчĕç. Хĕрарăмсенчен колхоз председателĕ пулса 7 çын, ферма заведующийĕсем — 30 çын, счетоводсем—34 çын тата бригадирсем—140 çын ĕçлеççĕ. Вĕсемпе уйрăмах тимлĕн ĕçлемелле, вĕсене куллен пулăшса тата вĕрентсе пымалла. Анчах пирĕн ку ĕçсем çителĕксĕр-ха.

Ертсе пырас ĕçри работниксем пуçарулла та тавçăрулла пулма тивĕçлĕ, вĕсен кулленхи ыйтусене тĕрĕс те хăюллă татса пама пĕлмелле. Пирĕн кадрсем хăйсене шанса панă ĕçе ăнăçлăн тăвасси—вĕсем марксизм-ленинизм теорийĕпе хĕçпăшалланнинчен, партиллĕ-политикăллă ĕçпе хуçалăхлă ĕçсене çыхăнтарса пыма пултарнинчен килет. Çавăнпа та пирĕн çамрăк кадрсене революциллĕ теорипе шĕрмаях хĕçпăшаллантарса пымалла, ертсе пырас ĕçĕн большевикла стилĕпе усă курма вĕрентмелле.

К. КВАСОВ,
ВКП(б) Сĕнтĕр райкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

Малта пыракан çынсем парти ретне кĕреççĕ

ЙЕПРЕÇ. Районри предприятисемпе колхозсенчи пуçламĕш парторганизацисем парти ретне илес ĕçе лайăхлатсах пыраççĕ. Парти ретне малта пыракан рабочисем, колхозниксемпе колхозницăсем кĕреççĕ. Буинскинчи сланец кăларакан производствăри парторганизаци иртнĕ çулта кăна ВКП(б) ретне çĕнĕрен 18 çынна илнĕ. Вĕсем пурте стахановецсем. Сăмахран Е. Воробьева юлташ ĕç нормине яланах 150 процент ытла тултарса пырать. Вăл обществăллă ĕçсене активлăн хутшăнать, рабочисем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе йĕркелессишĕн тăрăшать. Партине кĕрекен В. Белазина, Пуринин тата ытти юлташсем те производствăра лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ.

МТС-ри парторганизаци ВКП(б) ретне 8 çынна илнĕ. Çамрăк коммунистсем халĕ тракторсене юсанă, çавăн пекех тата ытти ĕçсенче те малти ретре пыраççĕ. Хурамалти пуçламĕш парторганизаци те малта пыракан çынсене партине илес ĕçе лайăх йĕркелесе пырать.

П. КУРАКОВ.

Ялпосем начар ĕçлеççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Районра пурĕ тăватă ялпо уйрăмĕ. Вĕсем пурте тĕрлĕ ĕçлеççĕ. Уйрăмах районра Пукаш ялпо уйрăмĕ (председателĕ Х. Итальева) начар ĕçлет. Караньялĕнчи «Труд» промартельри рабочисем иртнĕ çулхи ноябрь уйăхĕнче 12 талонпа çăкăр илеймесĕр юлнă, декабрь уйăхĕнче те хăшпĕр талонсемпе илмен. Халĕ ĕнтĕ январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа паянхи кунччен те çăкăр пĕçермеççĕ. Хăçан пĕçермесси те паллă мар.

Ялпо уйрăмĕн бухгалтерĕ А. Осипов, председатель заместителĕ А. Герасимова юлташсем ялпо председателĕпе пĕрле эрех ăшне путнă.

Ялпо çумĕнчи столовойăн работникĕсем те «хăйсем шутланă пек» ĕçлеççĕ. Столовăй час-часах хупă тăрать.

Хăçан йĕркеллĕ ĕçлеме шутлаççĕши кунти ялпо работникĕсем?

П. ЛЕНАР.

Хĕрлĕ Çар кунĕ умĕн

Тăвай районĕнчи райпромкомбината нумаях пулмасть организациленĕ. 1942 çулта унăн çунасемпе урапасем тăвакан пĕртен пĕр цех кăна пулнă. Унта 7 çын ĕçленĕ. Вăл плана 64 процент кăна тултарнă.

Промкомбинатăн управляющийĕ Игнатьев юлташ тăрăшнипе 1943 çулта çĕнĕрен тĕрлĕрен цехсем уçнă. Халĕ промкомбинатра 10 цех. Иртнĕ çулта цехсем кашни уйăхрах, кашни кварталрах плана ытлашшипех тултарса пычĕç. Çулталăкри производство программине 260,7 процент пурнăçланă. Коллективра плана тултарса пыман пĕр рабочи те çук. Уйрăмăнах çунапа урапа тăвакан, атă-пушмак юсакан, çăматă тăвакан, хăма çуракан, чӳлмек тăвакан цехсем лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ. Вĕсем плана 150—192 процент таран тултараççĕ. Çăматă тăвакан цех кашни уйăхрах 100 мăшăр выранне, 170 —192 мăшăр çăматă туса кăларать. Кунта З. Козлов, И. Алексеев юлташсем ыттисене пример кăтартаççĕ. Алексеев юлташ уйăхра 26 мăшăр выранне 50—52 мăшăр çăматă тăвать. Плана 185 процент ытла тултарса пырать. Çавăн пекех çунапа урапа тăвакан цехри рабочисем те кая юлмаççĕ. Акă, Семен Трофимов нормăна кулленех 150 процент, К. Никитин — 150 процент, Т. Коновалов — 145 процент, 60 çулхи Г. Васильев юлташ — 151 процент тултараççĕ. Юлашки вăхăтра чӳлмек тăвакан цехри рабочи Ф. Осипов нормăна 1,5—2 хут ирттерсе тултарма пуçларĕ. Хăма çуракансем С. Галкинпа, С. Моряков пысăк хăвартлăхсемпе ĕçлеççĕ. Атă-пушмак тăвакан цехри Николай Баярчук нормăна 150 процент тултарать. Çавăнпа пĕрлех вăл 4—5 çамрăка атă-пушмак юсама вĕрентет. Вăл вĕрентнипе Иван Михайлов халĕ хăй тĕллĕн ĕçлеме хăнăхса çитрĕ. Ĕç нормине 115 процент таран тултаракан пулчĕ. Тăрăшса ĕçлекенсем промкомбинатра сахал мар. Комбинатра стахановецсемпе ударниксен шучĕ 17 çынна çити ӳсрĕ.

Промкомбинат кадрсене выранта вĕрентсе хатĕрлет. Иртнĕ çулта 16 çын вĕрентнĕ. Халĕ тата 10 çын вĕренеççĕ. Вĕсене уйрăм мастерсем çумне çирĕплетнĕ.

Нумай пулмасть комбинатри рабочисен пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта вĕсем тунă çитĕнӳсене мĕнле çирĕплетесси çинчен, кăçал татах та пысăкрах ӳсĕмсем тăвасси çинчен калаçрĕç, хăйсем çине конкретлă обязательствăсем илчĕç. Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă кун тĕлне 1-мĕш квартал планне пурнăçлама, ĕç тухăçлăхне 20 процент ӳстерме, çак кварталта çĕнĕрен 5 рабочи вĕрентсе хатĕрлеме йышăнчĕç.

Райпромкомбинатăн ĕçĕнче çитменлĕхсем те тĕл пулаççĕ-ха. Ĕç дисциплинине çирĕплетес тĕлĕшпе татах та ытларах ĕçлемелле. Агитацийе ăнлантару ĕçĕ çителĕклĕ выранта мар, цехсенче стена хаçачĕсем тухмаççĕ, кăтарту хăмисем пур çĕрте те çук, лекцисемпе докладсем сахал пулаççĕ. Çак çитменлĕхсене хальтерех пĕтерсен, Тăвай райпромкомбиначĕ татах пысăк ӳсĕмсем тăвассине шанма пулать.

Е. ВАСИЛЬЕВА.

Катартуллăн ĕçлессишĕн

Иртнĕ çулта Шупашкарти çыхăну конторĕн ĕçĕнче чылай çитменлĕхсем пулнă. Малтанах калас пулать, çыхăну ĕçĕнче ĕçлеме кадрсем хатĕрлесси сӳрĕк выранта тăнă. Ĕçлекенсем хушшинче çирĕп дисциплина пулман. Çавна пула та ĕнтĕ çыхăну ĕçĕнче часах йĕркесĕрлĕхсем палăрнă.

Кăçал çыхăну ĕçĕнчи ĕçлекенсем пĕлтĕр пулнă çитменлĕхсене шута илсе, хăйсен умне темĕн пек йывăр условисенче те тип-тикĕс ĕçлесе пыма конкретлă обязательствăсем илчĕç. Ф. Адрианова, А. Большакова, Е. Стрельцова телефонисткăсем хăйсен сменинче яланах кăтартуллăн ĕçлеме пулчĕç. Çак кунсенче вĕсем пысăк ответлăхпа ĕçлени уççăнах палăрчĕ. Çавăн пекех А. Овчинникова, Т. Полякова телефонисткăсем те ĕçре паха примерсем кăтартаççĕ. Кундермен, Когаров монтерсем, канăç курмасăр ĕçлесе, задание икĕ хут ирттерсе тултарса пыраççĕ. Техник Сахаров юлташ çыхăну ĕçне кăтартуллă тăвассишĕн тимлĕн ĕçлет.

Çыхăну ĕçĕнчи ĕçлекенсем пурте социализмлă ăмăртăва хутшăнса, хăйсен ĕçĕнче лайăх тĕслĕхсем кăтартассишĕн пĕтĕм вăйран тăрăшса ĕçлеççĕ.

И. КОЗЕНКО,
Çыхăну конторĕн начальникĕ.

Республикăри районсем чугун çул валли вутă хатĕрлемелли çулталăкри плана 1943 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1944 çулхи февралĕн 5-мĕшĕччен мĕн чухлĕ тултарнине кăтартакан

СВОДКА

Районсем	Плана тултарнă (процентпа): Турттарас енĕпе	Плана тултарнă (процентпа): Хатĕрлес енĕпе	Мĕнле выранта тăрать: Турттарас енĕпе	Мĕнле выранта тăрать: Хатĕрлес енĕпе
Йĕпреç	74,6	77,4	1	3
Вăрнар	71,5	83,1	2	1
Шăхасан	68,0	76,9	3	4
Сĕнтĕрвăрри	63,1	80,4	4	2
Шупашкар	61,3	69,8	5	7
Первомайски	60,4	70,4	6	6
Ишлей	59,8	52,8	7	17
Канаш	56,2	67,2	8	9
Етĕрне	53,0	56,1	9	14
Елчĕк	52,0	55,3	10	15
Калинино	51,7	74,0	11	5
Çĕмĕрле	51,3	50,7	12	20
Вăрмар	51,2	69,0	13	8
Сĕнтĕр	49,7	46,4	14	24
Комсомольски	48,8	50,8	15	19
Октябрьски	47,5	45,2	16	26
Çĕрпӳ	46,8	63,3	17	10
Советски	46,5	49,9	18	21
Хĕрлĕ Чутай	46,3	57,5	19	12
Куславкка	44,3	45,3	20	25
Красноармейски	43,2	54,5	21	16
Пăрачкав	42,7	48,6	22	22
Улатăр	41,0	61,9	23	11
Элĕк	40,6	44,5	24	27
Тăвай	38,0	57,4	25	13
Чкаловски	31,4	46,8	26	23
Шăмăршă	29,3	52,6	27	18
Кувакино	26,1	35,4	28	28

Асăрхаттарни: Комсомольскипе Кувакино районĕсем тăрах даннăйсем февралĕн 1-мĕшĕнче пулнисемех юлаççĕ.

ПАТРИОТЛА ĔÇ

Харпызри «Главармалит» заводĕнче ĕçлекен рабочи, фронтовик ашшĕ М. М. Гончаренко, хăйĕн землякĕсене, Хĕрлĕ Çара тав тăвас шутпа, самолетсен эскадрильине тума сĕннĕ, ăна ирĕке кăларнă Донбасс ятне пама ыйтнă. Гончаренко юлташ çав эскадрильйăна тумалли фонда хăйĕн укçинчен 100 пин тенкĕ хывнă. (ТАСС)

„Красная стрела" поезда кам ертсе кайĕ?

Мускаври пассажирская ятлă депора, Социализмлă Ĕç Геройĕ машинист Виноградов юлташ пуçарнипе, паровоз бригадисен ăмăртăвĕ пуçланса кайнă. Машинистсен чи лайăх бригадисем «Красная стрела» поезда пĕрремĕш хутĕнче Мускавран Ленинграда илсе каймалли хисеплĕ правăшăн ăмăртаççĕ. (ТАСС).

Ют çĕршывсенче

Болгарире власть пуçĕнче тăракан çынсен ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларни

СТАМБУЛ, февралĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарин «халăх пухăвĕн» çак кунсенче хупăннă сессийĕн ларăвĕсенче премьер-министр Божилов тата власть пуçĕнче тăракан ытти çынсем Болгарин тулашри политики «оборонăллă» пулса тăнине тата Болгарин Югославирипе Грецири оккупациллĕ çарĕсем «мирлĕ ĕçсем» тунине кăтартса пама тăрăшнă.

Премьер-министр Божилов çапла каланă: «Болгари çарĕсем оккупациленĕ территорире ăна тытса илес тесе мар, унта йĕрке тытса тăрас тесе пурăнаççĕ». Цанков, çавăн пекех тата Болгарири реакционерсен ытти представителĕсем те, Болгарин туртăмĕсем мирлĕ туртăмсем пулнине тата «Болгари умĕнче пĕр задача—пĕрлĕхлĕ Болгарин чиккисене хӳтĕлесси пулса тăнине» кăтартса пама тем пекех тăрăшнă.

Болгари правителĕсем вăрçă ĕççисем гитлеровецсемпе вĕсен хӳрешкисемшĕн питĕ ăнăçсăр пулма пуçланă пирки тата вĕсем хăйсен çĕршывĕнчипе пĕтĕм тĕнчери халăха улталама тăрăшнă пирки çапла каланă. Анчах та вĕсем калани пĕтĕмпех фактсене хирĕç пырать.

Кунта çакă паллă пулса тăнă: Болгарире гитлеровецсемпе пĕр каварлă пулса ĕçлекен çынсем Югославии территорийĕнче терророла ĕçсем тума пăрахмаççĕ çеç мар, унтан тухса кайма хатĕрленмеççĕ çеç мар, вĕсем тата хăйсен Югославири корпусĕ патне Югославири халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çара хирĕç нимĕç чаçĕсемпе пĕрле вăрçакан оккупациллĕ корпусĕ патне çĕнĕрен икĕ дивизи яма йышăннă. Тăванла Югослави халăхне хирĕç Гитлерăн Болгарири помощникĕсем тунă çак вăрă-хурахла утăмĕ вĕсене тата ытларах варалать.

Болгарире власть пуçĕнче тăракан ушкăн Болгарин пĕтĕм территорине Совет Союзне хирĕç вăрçакан гитлеровецсен çарĕсен аллине панă. Болгарин Бургас, Варна, Рущук тата ытти порчĕсене Германин тинĕс-çар базисем туса хунă, вĕсемпе Совет Союзне хирĕç пыракан вăрçăра усă кураççĕ. Влаçсем Варнăран Болгари халăхне урăх çĕре куçарнă, нимĕç çарĕн тинĕс-çар бази туса хунă çав хулара Крымран илсе каякан нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене вырнаçтараççĕ.

Болгарири чугун çулсене тата Болгари флотне нимĕçсем контрольлесе тăраççĕ, çав чугун çулсемпе флот нимĕçсен Совет Союзĕпе Германи фронтне яракан çар грузĕсене турттараççĕ. Болгарири аэродромсем, телефонпа телеграф çыхăнăвĕ пĕтĕмпех нимĕç çарĕ аллинче.

Германин çарĕсем Болгарирен тĕрлĕ апат-çимĕç тата ытти хатĕрсем тăташах илсе тăраççĕ.

Гитлершăн тăрăшакан Болгари влаçĕсем—эпир Югославипе Совет Союзне хирĕç тунă агрессие хутшăнман, эпир хамăр чиккĕсене çеç хӳтĕлеме тăрăшатпăр, тесе суйса ыттисене шантарма тăрăшни нимĕ те тăмасть.

Болгарири лару-тăру

СТАМБУЛ, февралĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарирен килекен хыпарсем тăрăх, Болгарире лару-тăру калама çук сивĕчленсе кайнă. Лару-тăру сивĕчленнине çакă та кăтартса парать: юлашки кунсенче Болгари правительстви государство жандармерийĕ тума йышăннă. Çав жандармерин начальникĕ тӳрех шалти ĕçсен министрне пăхăнса тăмалла. Жандармерире, пехотăпа утлă çарсăр пуçне, моторизованнăй чаçсем те пулаççĕ. Жандармерие полицейскисене тата арми чаçĕсенчи çынсене илеççĕ. Ăна пăлхавсене, демонстрацисене пусарма тата партизансемпе кĕрешме тăваççĕ.

Январĕн 25-мĕшĕнче облаçсен начальникĕсен (губернаторсен) канашлăвĕ пулса иртнĕ. Çав канашлура шалти ĕçсен министрĕ «Поражени тӳсес шухăш-кăмăллă çынсене тата тĕрлĕ сăмах саракансене хаяррăн тыткалама» приказ панă.

Оппозицин паллă деятелĕсене правительство Софирен кăларса ярасси умĕнче те чарăнса тăмасть. Уйрăмăн илсе кăтартсан, çак кунсенче çĕр ĕçлекенсен лидерне Никола Петкова столицăран Свиштов хулине кăларса янă.

Власть пуçĕнче тăракан çынсем халăх хумханасран тата массăллă выступленисем тăвасран хăраççĕ, вĕсемпе кĕрешме полици вăйлăн хатĕрленет. Анчах çакă вăл, столица çине бомбăсем пăрахнине пула, йăлтах йĕркерен тухнă государство аппаратне çĕнĕрен йĕркене кĕртме пултараймасть. Софири чи аслă государство чиновникĕсем çеç мар, генералитетăн паллă представителĕсем те тарнă. Уйрăмăн илсе кăтартсан, Никифоров генералпа Вадев генерал ăçта тарса пытаннине халь те пĕлмеççĕ-ха. Софи облаçĕнчи полицин начальникĕ Керджиков генерал та тарнă.

Бомбăсем ишнĕ çуртсен ванчăкĕсене тасатас ĕçре влаçсем йăлтах аптăраса ӳкнĕ. Çавăн пирки ишĕлчĕксем айĕнче çăлма май пулнă çынсемех питĕ нумай пĕтнĕ.

Болгарире поездсем çӳремелли çĕнĕ расписани тунă. Пĕлекен çынсем каланă тăрăх, çав расписание нимĕçсен хăшпĕр çар чаçĕсене Румынирен Болгарие куçарма май пултăр тесе улăштарнă.

Гитлеровецсем Эстонире пусмăрлаççĕ, çаратаççĕ Литвара чрезвычайнăй положени туса хунă

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Швецире тухакан «Свенска дагбладет» хаçат çапла çырать: нимĕçсен оккупациллĕ влаçĕсем хушнă тăрăх, вăхăтлăха оккупациленĕ Совет Эстонийĕнчи халăха урăх çĕре куçараççĕ. «Нюа даглигт аллеханда» хаçатра пичетленĕ телеграммăран çакă курăнать: нимĕçсем мĕнпур арçынсене «васкаса» çара мобилизацилеççĕ. Анчах та Эстони патриочĕсем çак ĕçре гитлеровецсене хытă хирĕç тăраççĕ: «Афтон Тиднинген» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, эстонецсем пинĕ-пинĕпе вăрмансене тарса кайса, Эстони партизанĕсем çумне хутшăнаççĕ. Финсен «Ууси Суоми» хаçачĕн Таллинри корреспонденчĕ каланă тăрăх, Эстонире «юлашки вăхăтра вăрмансенче партизансен отрячĕсем йĕркеленнĕ. Çавăн пек темиçе отряд поездсене çӳреме кансĕрлеме хăтланнă».

Нимĕçсем вăхăтлăха оккупациленĕ Совет Эстонийĕнче халăха питĕ çаратаççĕ. Финсен «Ууси Суоми» хаçачĕ çапла çырать: юлашки вăхăтра нимĕç çарĕ валли апат-çимĕç нумай пухса илнĕ. «Хăйсем памаллине маларах парса татнă хуçалăхсен те çĕнĕрен апат-çимĕçпе выльăх-чĕрлĕх пама тивнĕ. Халăхăн çар валли лашасем, урапасем, велосипедсем тата йĕлтĕрсем памалла пулнă», тесе çырать хаçат.

«Ууси Суоми» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, хулара «шкулсене пурне те хупнă. Вĕсенче çар чаçĕсем вырнаçнă».

СТОКГОЛЬ, февралĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Швецире тухакан «Стокгольмс Тиднинген» хаçат нимĕçсем контроллесе тăракан Каунасри радис пĕлтернĕ тăрăх çапла çырать: гитлерла влаçсем пĕтĕм Литвара чрезвычайнăй положени туса хунă.

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй ставки çапла пĕлтерет: Америкăн 5-мĕш армийĕн тĕп фронтĕнчи Кассино секторĕнче хаяр çапăçу пырать. Союзниксен çарĕсем Кассино хулинчен çурçĕрелле тата хĕвеланăçнелле малалла куçнă. Анцио районĕнчи фронтра 5-мĕш армири американецсемпе акăлчансен чаçĕсем тăшманăн вăйлă контратакисене сирсе янă, тыткăна нумай илнĕ, Англин 8-мĕш арми чаçĕсем, малалла куçса, халăх пурăнакан Пиццоферрато тата Монтемеродомо ятлă пунктсене (Кьети округĕнчи тусем çинче) тытса илнĕ.

Союзниксен бомбăсем пăрахакан авиацийĕ ĕнер тăшманăн Италири çар объекчĕсене атакăланă.

Мăйракаллă шултăра выльăхсемпе ялхуçалăх ĕçĕсенче анлăн усă курар

Вăрнарти зооветтехникум Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче 14 лаша Хĕрлĕ Çара пачĕ. Вĕсем выранне иртнĕ çулта 7 кĕсререн 6 тиха илсе пăхса çитĕнтерчĕ. Мăйракаллă шултăра выльăхсемпе ялхуçалăхĕнчи ĕçсенче усă курас тесе тăвата вăкăр ӳстерчĕ.

Ĕçре усă курмалли çамрăк вăкăрсене 12-14 уйăхчен кастарман, мĕншĕн тесен çамрăкла кастарни вăкăра ӳсме чарать, вăхăтсăр самăрлатать.

Вăкăрсене 15 уйăх иртсен ĕçе вĕрентме тытăнатпăр. Чăн малтан эпир икĕ вăкăра пĕрле кӳлсе, унтан пĕчченшерĕн çӳреме вĕрентетпĕр.

Мăшăрăн кӳлсе çӳреме вĕрентнĕ чух, эпир яланах пĕр пек вăкăрсене суйласа илетпĕр. Вĕсен хушшине 60—75 сантиметр хăварса, мăйракисенчен вĕренпе çыхатпăр, вара вĕсем ик-виç кунтан пĕрле çӳреме хăнăхаççĕ, турта хушшинче те çӳреме вĕренеççĕ.

Вăкăрсене валли ятарласа хăмăтсем турăмăр. Хăмăтсемпе çӳреме вĕреннĕ хыççăн, паструмкаран пуш урапа е çуна (вăхăта кура) çаклатса яратпăр. Баярахпа вара тĕрлĕ грузсем тиесе çӳреме вĕрентетпĕр. Çулталăк çурăри вăкăрсем çине эпир 200—300 килограмма çити тиетпĕр.

Çапла майпа 10—15 кун хушшинче вăкăрсене кӳлсе çӳреме вĕрентме пулать.

Вăкăрсем тилхепесĕрех çӳреççĕ. Пăрăнмалла выранă çитсен çеç вĕсене çавăтма тивет. Тимлесех вĕрентсен, вăкăрсем хăшпĕр сăмаха хăнăхаççĕ, сăмахран, «но-о», «тпру» т. ыттисем. Пăрăнмалла выранă çитсен, пăрăнмалли енчи вăкăрăн ятне çеç калатпăр. Вăкăрсемпе ĕçре усă курнă чух пихăçан та кăшкăрса хăратма кирлĕ мар.

Пĕччен вăкăра çулăн ик айккипе тăрăн юр выртакан тĕлте вĕрентме çăмăлтарах. Çавăн пек çул çкпе илсе тухмалла та çунана кӳлмелле. Çул айккинчи тăрăн юр çине пăрăнса кĕме хăрапă пирки, выльăх ирĕксĕрех вара малалла утать. Çакăн пек меслетпе вĕрентнĕ вăкăрсем икшерĕн кăна мар, виçшерĕн-тăватшарăн та çӳреме вĕренеççĕ. Виçшерĕн-тăватшарăн кӳлсе çӳреме вĕрентни çулахи вăхăтшăн калама çук паха япала пулса тăрать. Вăл вăкăрсемпе вара йывăр япаласем тиесе турттарма пулать, уйрăмăнах тарăн сухалана çĕрте усă курма аван.

Вăкăрсене ĕçре усă курнă чух вăхатра тăрантарни, шăварни тата кантарни пысăк выран йышăнать. Ку тĕлĕшре çирĕп йĕркелĕх кирлĕ.

Вăкăрсем апат тиркекен выльăхсем мар, çĕрле вĕсене ыраш улăмĕ е çуртри улăмĕ памалла. Çак апата вĕтетсе е пăсpa çемĕçтерсе, тăвар сапса (кашни вăкăр валли 20—30 грамм) парсан аван пулать. Кăнтăрла ĕçрен пушансан, вĕсене лайăх утă парас пулать. Вăхăтра шăварсан вăкăрсем апата аван çиеççĕ, лайăх кавлеççĕ. Çавăнпа вăкăрсене тар типнĕ хыççăн 1,5—2 сехетрен шăвармалла. Хĕллехи вăхăтра çул çинче е ĕçре вăкăрсене шыва ăшăтса ĕçтермелле. Çинĕ апата кавлеме вăкăрсене çителĕклĕ вăхăт кирлине яланах асра тытмалла. Çавăнпа апат çитернĕ хыççăн, йывăр ĕç умĕн, выльăхсене пĕр сехет е сехет çурă кавлеме вăхăт памалла. Çăмăл ĕçе кайнă чух вăкăрсене тăрантарнă хыççăнах ĕçе кӳлме пулать, мĕншĕн тесен хуллен пынă май тата чарăннă вăхăтсенче вĕсем кавлеме пултараççĕ. Кавлеме вăхăт памасан, вăкăрсем ăшпа аптрама пултараççĕ. Ăшпа аптранă пирки вăкăр кӳпĕнет, чĕкрене кайма пултарать. Вăкăр сывмарланнă пулсан, çийĕнчех ветеринари врачне чĕнмелле, вăл хушнисене пурне те пурнăçламалла.

Çавăнпа та ĕçре усă куракан вăкăрсене хăш вăхăтра çитермеллине, шăвармаллине тата ĕçлемелли вăхăта ветеринари врачĕпе канашласа йĕркелесен аван пулать.

Вăкăрсемпе ака-суха ĕçĕнче те усă курма пулать. Анчах та плугсен тимĕрĕсем (лемехсем) винтлă пулмалла, мĕншĕн тесен, вăкăрсем еришен утнă пирки, ахаль плугсемпе сухаланă чух сухалакан çĕр тепĕр май çаврăнса выртаймасть. Вăкăрсемпе йывăр япаласем турттарнă тĕлте те усă курма пулать, анчах та пушăлла сахалтарах çӳремелле.

Вăкăрсене кӳлме вĕрентес ĕçри пирĕн опыт колхозсенче туртăм вăйне ӳстерсе пымалли майсене уççăн кăтартса парать тата колхозсенчи вăкăрсене вĕрентес ĕçре пулăшни пулса тăрать. Çакна асра тытса, техникум çумĕнче эпир ĕне выльăхсене вĕрентмелли пункт, вăкăрсем валли сӳсмелсем тата кӳлме кирлĕ ытти хатĕрсене тăвакан мастерской турăмăр.

Техникум çумĕнчи пункта эпир çамрăк вăкăрсене вăкăра пăхаканĕпе пĕрле йышăнатпăр. Хальхи вăхăтра 12 вăкăр тата 2 пушмак пăру вĕрентетпĕр.

Я. Семьянов,
Вăрнарти зооветтехникум директорĕ.

Пĕлтерӳсем

Ыран, февралĕн 10-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) горкомĕн парткабинетĕнче (Чувашски ур., 6) лекци пулать. Лекци теми:

«Геройла Ленинград».

Лекцие Ардаматский юлташ вулать.

Лекцие пурте кĕрсе итлеме пултараççĕ.

ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Терминологи Комиссийĕпе Чăвашсен Наукăпа Тĕпчев Институчĕ паян, февралĕн 9-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, Пионер Çурчĕн вулав залĕнче доклад лартаççĕ. Доклад теми:

«Отечественнăй аслă вăрçă тапхăрĕнчи чăваш чĕлхи».

Докладчик — филологи наукисен кандидачĕ С. П. Горский.

Ответлă редакторшăн
П. Т. ЗОЛОТОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00327 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59X42 п. л, Тираж 14.400 экз,